Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

18 (8084) № ✻ Шăмат кун, 2013 ҫулхи пуш (март) уйăхĕн 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Авиаҫыхăну йĕркеленĕ

Чăваш Республики апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа Атăл ҫи федераллă округри регионсем хушшинчи сывлăшри ыхăнăва тивĕçтерессипе «пилотлă» программăна хутшăнать. Ҫавна май асăннă программа шайĕнче пассажирсем çăмăллăхпа усă курĕç. Авиабилетăн ҫур хакне пассажир тӳлет, ыттине – патшалăх саплаштарать. Ҫакă – «пилотлă» проектăн тĕп енĕ.

Апрель уйăхĕнчен пуҫласа ноябрьччен Чăваш Республикин «Шупашкар аэропорчĕ» хысна предприятийĕ пассажирсене Саратов, Самара, Ĕпхӳ хулисене ҫитерессипе ĕçлет. Самара хулине пĕр эрнере 10, Саратова –7, Ĕпхӳне 4 авиарейс пулĕ.

«Шупашкар – Самара» – 5860 тенкĕ, пассажир 2930 тенкĕ тӳлет, ытти пайĕ – субсиди шучĕпе.

«Шупашкар – Саратов» – 11828 тенкĕ, пассажир 5914 тенкĕ тӳлет, ытти – субсиди шучĕпе.

«Шупашкар – Ĕпхӳ» – 8789 тенкĕ, пассажир 4395 тенкĕ тӳлет, ытти – субсиди шучĕпе.

Асăннă проекта хутшăнни округри хуласем хушшинчи авиаҫыхăнăва йĕркелеме май парать. Росавиаци конкурс йĕркипе Тутарстан авиакомпанийĕ тĕп оператор пулнине палăртнă.

**Хамăр инф.**

Ыран – Суту-илӳре, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессинче тата ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхра ĕçлекенсен кунĕ

## Халăх ыйтăвне тивĕçтереççĕ



*Сăн ӳкерчĕкре эсир (сулахайран сылтăмалла) Л.Столярова, Э. Андреева, С. Никонова, А. Степанова çĕвĕçсене тата (варринче) В. Колбасова цех ертӳçине куратăр. Тăрăшуллă та туслă коллектив пиллĕкмĕш ҫул ĕнтĕ халăх ыйтăвне туллин тивĕçтерет. Эпĕ вĕсен ырă ĕç-хĕлĕ пирки пĕрре кăна мар илтнĕскер, хаваспах цех ертӳçипе калаçрăм.*

*– Эпир тĕрлĕ тумтир, ытти япала çĕлетпĕр, юсатпăр. Кунта килекен яланах йышлă, ҫакна эпĕ чи малтанах ытти çĕртинчен хак йӳнĕрех пулнипе тата пысăк опытлă çĕвĕçсем кирек епле ĕçе те пысăк пахалăхпа пурнăçланипе ҫыхăнтаратăп. Пирĕн хамăрăн яланхи клиентсем пур, ĕçсĕр пачах та лармастпăр. Кăмăл тăвакансене, пире шанакансене Муркаш пасарĕнчи «Парус» лавккан иккĕмĕш хутĕнче хапăл тăватпăр, – паллаштарать кунти ĕç-хĕлпе Венера Колбасова.*

*Эпир вара сире профессиллĕ уяв ячĕпе саламлатпăр, ҫирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**СУТУ-ИЛӲРЕ, ЙĂЛА СЛУЖБИНЧЕ ТАТА ПУРĂНМАЛЛИ ҪУРТ-ЙĔРПЕ КОММУНАЛЛĂ ХУҪАЛĂХРА ĔҪЛЕКЕНСЕМ, АСĂННĂ ОТРАСЛЬСЕН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те хăвăрăн професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир районта пурăнакансен пурнăç условийĕсем лайăхланса пычăр тесе тăрăшатăр: потребительсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме, ҫынсене тĕрлĕрен пулăшу парассипе тимлетĕр, хăвăрăн тивĕçĕре явапллăха туйса пурнăçлатăр. Эсир халăхшăн тăрăшатăр, кашни ҫемьене хăт кĕртетĕр.

Хăйсен професси уявне асăннă сферăсенче ĕçлекенсем япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем районта çеç мар, Чăвашпотребсоюз системинче те, Раççей Федерацийĕн Центросоюз шайĕнче те ырă ятлă. Иртнĕ ҫул вĕсен ĕç опычĕпе паллашма çĕр-шывăн 70 ытла регионĕнчен килсе курчĕç. Асăннă коллективсем ҫынсене кирлĕ таварпа тивĕçтернипе пĕрлех ял ҫыннисене килти хушма хуҫалăхра туса илнĕ ял хуҫалăх продукчĕсене вырнаçтарма та пулăшаççĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Педагогсен форумĕнче

Ĕнер Муркашри вăтам шкулта районти педагогсен форумĕ иртрĕ. Унта хутшăннисем – шкул директорĕсемпе вĕрентекенсем, районти вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн попечительсен канашĕн членĕсем малтанах район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикинпайĕн пуçлăхĕн 3. Дипломатовăн анлă доклачĕпе паллашрĕç. Педагогăн хальхи стандарта тивĕç тесен мĕнле пулмалли пирки, вĕрентӳ пахалăхне ӳстерессин майĕсем ҫинчен, шкулсенче пултаруллă ачасене аталантарма ĕç тытăмне йĕркелесси пирки калаçрĕç, вĕрентӳ сферинчи малашнехи утăмсене палăртрĕç.

## Библиотекарьсем канашланă

Районти ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче библиотека ĕçченĕсен семинар-канашлăвĕ иртнĕ.

Хăйсен ĕçлĕ тĕл пулăвĕнче районти библиотекарьсем Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ М. Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тухнă Ҫырăвне тишкерсе унта палăртнă ыйтусене пурнăçа кĕртессипе мĕн тумалли пирки калаçнă.

Организаципе методика секторне ертсе пыракан Е. Романова ял библиотекисем республикăра иртернĕ «Чăваш литератури: 2011 ҫулхи чи нумай вуланă кĕнеке» конкурса хутшăнни пирки пĕтĕмлетӳ тунă. Ҫавăн пекех библиотекарьсем тăван тавралăха сыхламалли ҫулталăка халалласа иртерекен ĕçсем пирки тата вĕсене вулавçăсене кăсăклантармалларах иртерессинчен калаçнă.

## «2013 ҫулхи воспитатель»

Пуш уйăхĕн 12-мĕшĕнче район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕ республикăра иртекен «2013 ҫулхи воспитатель» професси конкурсне хутшăнакан воспитательсемпе семинар иртернĕ. Асăннă конкурс шкул ҫулне ҫитмен ачасен вĕрентӳ заведенийĕсенче творчествăлла ĕçлекен педагогсене тупса палăртассипе, вĕсене хавхалантарассипе тата воспитательсен ĕçĕн чысне ӳстерессипе иртет.

«2013 ҫулхи воспитатель» конкурсăн районти тапхăрне хутшăнма 8 воспитатель кăмăл тунă. Вĕсен шутĕнче «Солнышко», «Василек», «Путене», «Мечта», «Колокольчик» ача сачĕсемпе «Катькассинчи пуçламăш шкул – ача сачĕ» тата Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕсен ĕçченĕсем. Конкурс 3 турпа иртет. Пĕрремĕшĕ – куçăмсăр тур, куçăмсăр майпа хаклаççĕ. Жюри членĕсем Интернет-ресурспа паллашаççĕ. Иккĕмĕш турта – педагогсен творчество презентацийĕ тата вĕсен ачасемпе ĕçлес енĕ. Виççĕмĕш турта конкурс участникĕсем мастер-класс иртерессĕ тата çавра сĕтел хушшинчи калаçăва хутшăнаççĕ.

## Лĕпĕшсен выставки

Ҫут ҫанталăка сыхламалли ҫулталăк шайĕнче тури чăвашсен районти музейĕнче хамăр тăрăхри лĕпĕшсен экспозицийĕн выставки ĕçлет. Коллекци авторĕ – Канаш хулинче пурăнакан Павел Никитин.

Коллекципе хамăр тăрăхра час-часах тĕл пулакан лĕпĕшсемпе пĕрлех Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнисем те пур.

**Н. НИКОЛАЕВА, А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Раççейре

## Пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явнă

Мартăн 14-мĕшĕнче Мускаврва Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Правительствин Пуҫлăхĕпе Дмитрий Медведевпа тĕл пулнă. Вĕсем 2012 ҫул итогĕсене, социаллă пурнăçа экономика аталанăвĕн тата республика территорийĕнчи инфраструктура проекчĕсене вăя кĕртес ыйтусене сӳтсе явнă.

Ҫав кунах Михаил Игнатьев Раççей Правительствин ларăвне хутшăннă. Кунта çĕр-шывра физкультурăпа спорта аталантарас программа проектне сӳтсе явнă. Михаил Игнатьев республикăра физкультурăпа спорт юхăмне аталантарни ҫинчен тухса каланă.

## Тӳлевсем ӳсрĕç

Инвалид ачасем пур çемьесене пулăшас тĕллевпе РФ Президенчĕ февралĕн 26-мĕшĕнче 175 номерлĕ «О ежемесячных выплатах лицам, осуществляющим уход за детьми-инвалидами и инвалидами с детства 1 группы» Указ йышăннă.

2013 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен инвалид ачана е ачаранпах 1 ушкăн инвалидне пăхса пурăнакан ĕçлемен ашшĕ-амăшĕсене (усрава илнисене) е опекăна илнисене (попечительсене) уйăхсерен 5500 тенкĕ тӳлемелле. Инвалида пăхаканни урăх ҫын пулсан ăна 1200 тенкĕ тӳлеме йышăннă.

Уйăхсерен тивĕçтермелли тӳлеве инвалид ачана е ачаранпах 1 ушкăн инвалидне паракан пенсипе пĕрле ăна пăхса тăнă тапхăрта тӳлесе тăраççĕ. РФ Пенси фончĕ тӳлевĕн çĕнĕ виçине ятарлă заявлени ҫырмасăрах, унчченхи документсем тăрăх çĕнĕрен шутласа парать. Ҫапла вара январь-февраль уйăхĕсемшĕн те тӳлеве çĕнĕрен шутласа хушма тӳлевпе тивĕçтереççĕ.

Кăҫалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн районта çак тӳлеве 18 ҫула ҫитмен инвалид ачана пăхса ӳстерекен 46 ҫын (ытларах ашшĕ-амăшĕсем), опекăна илнисем 11 ҫын, ыттисем 48 ҫын илсе тăнă.

**Хамăр инф.**

Патшалăх çăмăллăхĕсем

## Нумай функциллĕ центр ĕçĕ анлăланать

Район администрацийĕнче «пĕр чӳрече» мелĕпе ĕçлекен нумай функциллĕ центр халăха тĕрлĕ ыйтупа йышăнни питĕ меллĕ. Кунта килнĕ ҫынна чи малтанах тивĕçлĕ консультаци параççĕ, документсене йышăнаççĕ. Палăртнă вăхăтра унăн хатĕр документсем илме килмелле кăна.

Нумай функциллĕ центр халăха кăткăс, документпа справка пухасси вăрах тăсăлакан ыйтусемпе йышăнать. Ку таранччен унăн услуги шутне çĕр арендин килĕшĕвне тăвасси, çĕр лаптăкĕн суту-илӳ килĕшĕвне йĕркелесси, çĕр лаптăкĕн тĕллевне улăштарасси, муниципаллă пурлăх реестрĕнчен ҫырни, ҫурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен шутне кĕртнĕ çамрăк çемьесене ҫурт-йĕр туянма (тума) социаллă тӳлев валли свидетельство парасси кĕнĕ.

Кунти ĕç-хĕл анлăлансах пырать. Халĕ вара хушма услугăсен шутне ҫурт-йĕр çĕклеме çĕр лаптăкĕсем уйăрасси (объект ăҫта вырнаҫасси пирки маларах палăртнипе тата унсăр); строительство ĕçĕпе ҫыхăнман ĕç-хĕл валли çĕр лаптăкĕпе тивĕçтересси; муниципаллă харпăрлăхри ҫурт-йĕре (анчах та пурăнмалли ҫурт-йĕр мар) арендăна парасси кĕрет. Иккĕмĕш кварталта вара асăннă центр Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн услугисемпе те тивĕçтерме палăртать. Ҫапла вара патшалăх паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхне ӳстерес çул-йĕр пурнăçланни куç кĕрет.

Центр ĕçченĕсем район ҫыннисене яланах хапăл тăваççĕ, услугăпа тивĕçтересси пирки тĕплĕнрех 62-3-15 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**Р. МАКАРОВА.**

Ҫырăнтару – 2013

## Хакĕ ӳсиччен ҫырăнăр

**Хаклă вулаканăм! Мартăн 31-мĕшĕччен «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата кăҫалхи 2-мĕш ҫур ҫулта илсе тăма унччĕнхи хакпа – ултă уйăха 204 тенкĕ – ҫырăнтараççĕ.**

**Апрелĕн 1-мĕшĕнчен пирĕн хаҫата ҫырăнмалли хак ӳсет: 216 тенкĕ те 30 пус пулать.**

**Ҫавăнпа малтанхи хакпа ҫырăнса юлма тăрăшăр. Ыранхи куна ан хăварăр.**

# Уçă калаçуран усси ытларах

## Район администрацийĕн кунĕнчен

***Ял тăрăхĕсене тухса район администрацийĕн кунĕсене ирттересси пĕрремĕш çул мар пулса пырать. Кăçал та ирттерме палăртнă вĕсене. Мартăн 12-мĕшĕнче район администрацийĕн кунĕ Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче иртрĕ.***

Ответлă ĕçченсем малтанах ял тăрăхĕн территорийĕнчи «Колос» агрофирмăна çитсе курчĕç. Михаил Лукиянов предприятийĕнче 16 пуç сурăх тата 13 пуç ĕне. Элĕк тата Муркаш районĕсенче усă куракан çĕр лаптăкĕсен шучĕ 700 гектара яхăн. Анчах та йĕрке тăвассипе ĕçлемелли сахал мар.

Опрыскьялĕнчи Владимир Павлов хресчен (фермер) хуçалăхĕнче те çитменлĕхсем малти вырăна тухса тăраççĕ. Пĕлтĕр кунта мăйракаллă шултра выльăх 63 пуç пулнă пулсан, кăçал 20 пуç кăна. Чи малтанах вара йĕркесĕрлĕх пиркиех сăмах пуçарма тивет. Ĕç вырăнĕсене тирпейлесси, хăт кĕртесси пирки манма юрамасть. Пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнассипе те татса паман ыйтусем пур.

Шетмĕпуçĕнчи В. Горбуновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче паянхи ĕçсене япăх шайра темелле мар. Кунта вăй хуракансем çурхи ака ĕçĕсем валли вăрлăх аласа хатĕрлессипе тимлеççĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев малтанах Шетмĕпуç ял тăрăхĕн администрацийĕнче хресчен (фермер) хуçалăхĕсен, вырăнти агрофирмăн ертӳçисемпе тĕл пулчĕ, фермерсем усă куракан çĕр лаптăкĕсен вăçипе, кăçалхи ĕç планĕсемпе интересленчĕ.

Çавна палăртмалла. Ял тăрăхĕн территорийĕнче çĕрпе усă курасси хальхи вăхăтра саккунпа пăхнă пек йĕркеллĕ пулса пыраймасть-ха. Татса памалли ыйтусем çук мар. Харпăрлăхра пĕтĕмпе 2690 гектар çĕр пулсан, вĕсенчен 50 процентне саккунлă йĕркепе çирĕплетмен. Пай çĕр хуçисем 904 çын, вĕсенчен 303-шĕ кăна çĕр участокĕсене саккунлă йĕркепе харпăрлăха çирĕплетнĕ. Ыйтман çĕр пайĕсем 532. «Кашни сотка çĕр лаптăкĕ ял тăрăхне укçа-тенкĕ тĕлĕшпе усă пама тивĕç, усăсăр выртакан çĕр лаптăкĕсем пачах пулмалла мар, çĕрсемпе усă курассинче саккунпа пăхнă çирĕп йĕрке кирлĕ»,– палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

Тĕл пулу итогĕсене Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрĕнче пĕтĕмлетрĕç. Вырăнти актив пухăвне район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев уçрĕ, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Патшалăх Канашне янă Çырура кашнин умне лартнă задачăсем, вĕсене пурнăçа кĕртесси пирки тĕплĕ чарăнса тăчĕ.

Иртнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсем пирки депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Александр Давыдов отчет туса пачĕ. 2012 çулта депутатсен районти Пухăвĕн 10 ларăвне ирттернĕ, вĕсенче 61 ыйту сӳтсе явнă. Çулталăк хушшинче район бюджечĕпе çыхăннă ыйтусене 6 хутчен пăхса тухнă. Çакă вăл республика бюджечĕн шучĕпе района хушма укçа-тенкĕ уйăрса панипе çыхăннă.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ парассине модернизацилессин йĕркипе Шетмĕпуç шкулĕнче 4 миллион тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем туса ирттерме май килнĕ. Четретре вара – Тивĕшри ача сачĕн çурчĕн çивиттине юсасси, кунтах ачасен талăкĕпе пурăнмалли хушма ушкăнне йĕркелесси.

Кайран Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Александров сăмах илчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче бюджет укçи-тенкипе çыхăннă ыйтусене хускатрĕ вăл. Ял тăрăхĕн территорийĕнче пĕтĕмпе 8 ял. Вĕсенче 1332 çын пурăнать. Иртнĕ çул 16 ача çуралнă тата 23 çын вилнĕ.

Николай Поликарпович палăртнă тăрăх çак вăхăта ялсенчи çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе, çулсем тăвассипе татса паман ыйтусем пур-ха. Кăçал Катăкуй ялĕнчи Западная урамра çул тума палăртнă. Хĕллехи вăхăтра çулсене тасатса тăрассипе кăлтăксем пулман. Ку ĕçсене кăçал Горбуновăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ пурнăçлать.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче çĕршĕн тата уйрăм çынсен пурлăхĕнчен налук пухасси кирлĕ шайра мар. Апла пулсан активăн та ял çыннисемпе тачăрах ĕçлес пулать. Умра тăракан тепĕр пысăк задача – ял тăрăхĕн территорийĕнчи куçман пурлăхăн мĕн пур объекчĕсене тата çĕр участокĕсене регистрацилесе харпăрлăха çирĕплетсе пĕтересси. Ку тĕллевпе вара ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те, депутатсем те, ял тăрăхĕн активĕ те пĕрле çыхăнса ĕçлесе пыни кирлĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та çакна палăртса хăварчĕ.

Канашлура ял тăрăхĕн территорийĕнче преступленисемпе кĕрешесси мĕнле шайра пулнипе полицин участокри уполномоченнăйĕ В. Бирюков паллаштарчĕ. Унченхи çул преступленисене 22 регистрациленĕ пулсан, иртнĕ çул вĕсем 12 пулнă.

Ял тăрăхĕнчи ĕçсем пирки хăйсен шухăшĕсене шкулти физкультура учителĕ Сергей Степанов, унччен Мичурин яч. хис. хуçалăха ертсе пынă Алексей Петров, Шетмĕпуç шкулĕн директорĕ Антонина Степанова каласа пачĕç. Алексей Петрович çынсен культурин, ватă çынсене хисеплессин, Катăкуйĕнче çул тăвассин ыйтăвĕсене хускатрĕ, çĕрпе пĕлсе усă курма кирлине палăртрĕ. «Малашне ытларах ыттисем çине мар, хамăр çине шанас пулать», – терĕ вăл. Ялта шыв ыйтăвне татса парассипе те пĕрле ĕçлени кирлĕ. Антонина Владимировна ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессипе пĕрле çыхăнса ĕçлемеллине палăртрĕ, çынсене ытларах явăçтарма кружоксен ĕçне шкулсенче кăна мар, культура учрежденийĕсенче те йĕркелеме сĕнчĕ.

Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен унăн директорĕ Игорь Смирнов каласа пачĕ. 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса информаципе культура центрĕ юридици вăйĕнче шутланать. Унăн филиалĕсем шутĕнче Шетмĕпуç ялĕн библиотеки, Тивĕшри Культура çуртĕ тата Тивĕш ялĕн библиотеки. 2012 çул итогĕсемпе Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрĕ палăртнă ĕçсене пурне те пурнăçлама пултарнă. Пĕтĕмпе 290 мероприяти ирттернĕ, вĕсене 7600 çын хутшăннă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çавна та палăртса хăварчĕ. Малашне информаципе культура центрĕсен, библиотекăсен çынсене пулăшу парассипе ĕç калăпăшĕ ӳсмелле. Çывăх вăхăтрах вĕсенче «пĕр чӳрече» меслепе çынсене патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе тивĕçтерессине йĕркелеме пăхнă.

Медицина ыйтăвĕсене те çĕклерĕç тĕл пулура. Çынсене грипп чирĕнчен асăрхаттарасси, диспансеризаци тăрасси пирки татса памалли ыйтусем пур. Вырăнти шăл тухтăрĕ пулманни те ыйтусем çуратать. Ыйтăва татса пама вара майсем пурах.

Район администрацийĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссийĕн ĕçне йĕркелесе пыракан сектор заведующийĕ Лариса Петрова ачасене воспитани парассипе ашшĕ-амăшĕ умĕнче тăракан задачăсем çинче чарăнчĕ, вĕсен малашлăхĕ мĕнле пуласси кашнинчен килнине палăртрĕ. Ăнăçсăр çемьесем пирки те калаçмасăр май çук. Вĕсене ниепле те айккинче тăратса хăвармалла мар. Общество çак ĕçрен айккинче пулмалла мар.

Муркаш район администрацийĕн Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче ирттернĕ кунĕн итогĕсене Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Александров пĕтĕмлетрĕ, пĕр-пĕринпе куçа-куçăн пулса тӳррĕн калаçнинчен усси ытларах пулассине шантарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Саламлатпăр



Оринин ял тăрăхĕнчи Патаккассинче пурăнакан юратнă мăшăра, аннене, хунямана, кине, ырă кăмăллă тăхлачăна тата çывăх тăванăмăра – **Вера Васильевна ДАНИЛОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрĕнче ĕçрен тата çынна пулăшасран пăрăнманскерне малашне те тату пурнăç, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та вăрăм пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕ, хăтипе тăхлачи, хуньстарикĕ, Даниловсем, Федотовсем, Артемьевсем, Захаровсем, пĕрле ĕçлекенсем.**



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăр – Платкасси ялĕнче пурăнакан **Иван Михайлович МИХАЙЛОВ** мартăн 19-мĕшĕнче 82 çул тултарать. Çуралнă кунĕ ячĕпе эпир ăна ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пирĕнпе юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр, тав сăмахĕ калатпăр. Малашнехи çулу та такăр, тикĕс пуласса шанатпăр. Вăрăм ĕмĕр пурăнма ăшă кăмăл, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 2 мăнукĕ çемйисемпе тата 5 кĕçĕн мăнукĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – Çеменкасси ялĕнче пурăнакан **Нина Антоновнăпа Петр Алексеевич МИХАЙЛОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир пурри пирĕншĕн пысăк телей. Сире малашне те çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр.

Кĕреке тулли хăна-вĕрле,<br>
Тепĕр 50–60 çул пĕрле<br>
Пурăнасчĕ сирĕн ыр курса, телей курса,<br>
Пĕтĕм тăвана савăнтарса.

**Салампа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, ырă кăмăллă аннене, хунямана, кукамая, кине, хисеплĕ пускиле – Шурча ялĕнче пурăнакан **Надежда Ананьевна ДАНИЛОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ачасене вĕрентсе кăларма, мăнуксене çитĕнтерме пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Телей, ăнăçу, юрату яланах юнашар пычăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, ывăлĕ, икĕ кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем, пускилсем.**



Йӳçкассинче пурăнакан **Галина Васильевна МАНОЛЬ** çак кунсенче хăйĕн юбилейне паллă турĕ. Пирĕн юратнă та хаклă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, мамака, тăванăмăра çак паллă кунпа ăшшăн саламлатпăр.

Утас çулу санăн вăрăм та такăр пултăр, Турри вăй-хал парса тăтăр, чирчĕртен упратăр. Малашне те ачăрсемпе, мăнукусемпе, тăвансемпе савăнса та килĕштерсе пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Пире пулăшса тăнăшăн, çемье ăшшине упраса пурăннăшăн чĕререн тав тăватпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç. Эпир сана юрататпăр, санпа мăнаçланатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**

# Сире "Максан" заправка станцийĕ кĕтет

***Иртнĕ уйăхра Муркаш салинчи "Сельхозтехника" картишĕнче "Максан" çĕнĕ заправка станцийĕ уçăлчĕ. Кĕске тапхăртах «Максанăн» яланхи клиенчĕсем тупăнчĕç. Çакна эпĕ унти ĕç-хĕлпе паллашма кайсан куртăм. Автомашина черечĕ кунта пĕчĕк марччĕ, кашниех пур енлĕ меллĕ заправка услугине тивĕçесшĕн иккен. Сăлтавпа усă курса çакăнти йĕркелӳçĕпе Александр ГРАЧЕВПА калаçрăм.***



– Тĕрĕссипе вара автозаправка станцине вăя кĕртме иртнĕ çулах тĕллев тытнăччĕ. "Максан" Муркашра иккĕмĕш станци кăна-ха. Ку таранччен халăха пĕр точка кăна тивĕçтернĕ.

Муркашра пурăнакансен йышĕ 4–5 пин майлă, районĕпе илсен вара 37 пине яхăн çын. Автомашина тытакансен йышĕ çулсеренех ӳссе пырать, çавна май автозаправка станцийĕн услугипе усă курас текенсем те йышлăн. "Максан" вара çынсен кăмăлне, ыйтăвне туллин тивĕçтерессишĕн тăрăшать. Автозаправка станцийĕ икĕ тĕрлĕ нефть продукчĕ сĕнет: пĕри – АИ – 92, тепĕр тĕрли вара – дизель топливи.

**– Ырă йăла тăрăх çĕнĕрен уçăлнă станци туянакана йӳнĕ хак сĕнет пулĕ.**

– Тĕрĕсех палăртрăр. Хакĕ вара пирĕн патра чăннипех те ытти çĕртинчен уйрăлса тăрать. Бензин кунта йӳнĕрех хакпа туянма пулать, тата тепĕр уйрăмлăх пур пирĕн – "Максан" контейнерлă ав-

## Халăх ыйтăвне тивĕçтерсе



тозаправка станцийĕ шутланать. Ăна лартассин тăкакĕ пĕчĕкрех, шалти йĕркепе хăтлăха тăвасси те ансатрах тата вăл кăçăмлă. Çаксем йăлтах бензин хакне пĕчĕкрех тума май параççĕ.

**– "Максан" анчах уçăлчĕ пулин те кунта килекенсем йышлăн. Мĕнпе илĕртеççĕ-ха сирĕн ĕçченсем вĕсене?**

– Пирĕн ĕç-хĕле аякри çын хаклани питĕ кăмăллă. «Максан» клиенчĕсен ытларах пайĕ таксистсем тесен йăнăшмастăп пулĕ. Пĕлтĕпĕр ĕнтĕ, вĕсем тăтăшах çул çинче, апла пулин те пирĕн автозаправкăна кăмăллани аван курăнать.

Пирĕн патăмăрта тивĕçлĕ продукци сĕнесси пĕрремĕш вырăнта тăрать. Бензин пахалăхне вара тĕрлĕ пахалăх сертификачĕсем те çирĕплетеççĕ. Продукци линейки ЕВРО – 5 экологи класĕпе танлашать. Унăн паха енĕсем питĕ нумай. Вĕсене манăн уйрăммăнах палăртас килет:

1. Бензин хăйĕн хăватлăхĕпе туллин тивĕçтерет.
2. Топливо тăкакĕсене чакарма май парать.
3. Тĕрлĕ шăв-шава, вибрацие чакарать.
4. Мотор çуне улăштармалли тапхăр пысăклатать.
5. Топливо системине коррозинчен сыхлать.
6. Двигателĕн ĕç вăхăтне ӳстерет.
7. Карбюратора çӳпçапран тасатать.

**– Апла пулсан кăмăла тивĕçтерекен заправка станцин услугипе хăш вăхăтсенче усă курма пулать-ха? Каçа юлнă çынсене сирĕн ĕçченсем йышăнĕç-и?**

– Паллах, «Максан» ирхи пиллĕкрен пуçласа каçхи вун пĕрччене ĕçлет. Апла пулсан пирĕн станци услуги – сире валли. Кунти ĕçченсем кирек хăçан та пурне те хапăл туса кĕтсе илĕç.

Александр Грачевпа калаçнă хыççăн кунта килнисен шухăш-кăмăлĕсене те пĕлес терĕм.

– Бензин хакĕ йӳнĕ пулни пире савăнтарчĕ, манăн автомашина та «ӳпкелемерĕ», – пулчĕ водителĕн хаклавĕ.

Çапла вара пурин хаклавне, кăмăлне пĕтĕмлетнĕ май çакна палăртас килет. «Максан» автозаправка станцийĕн вырăнти ĕç-хĕлĕн тĕллевĕ – çынсене паха продукципе тивĕçтересси. Çакна та палăртас килет: «Максан» район бюджечĕн ӳсĕмĕнче паллă вырăн йышăнмалла.

**«Максан» ĕçĕпе Р. ИЛЛАРИОНОВА паллашнă.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Çавăн пекех районти предпринимательсем те халăха кирлĕ таварсемпе тата йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессинче вăй хураççĕ. Магазинсенче таварсен ассортименчĕ пуянлансах, суту-илӳ культурин, халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерессин шайĕ хăпарсах пырать.

Çынсене ăшăпа, çутăпа, шывпа тивĕçтерессинче «Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ» МУП ĕçченĕсем çав тери тăрăшуллине палăртса хăвармалла. Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ку енĕпе сиксе тухакан кăлтăксене вăхăтра пĕтерессишĕн ырми-канми ĕçлетĕр. Иртнĕ çул промышленность тата пулăшу паракан предприятисем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕпе «Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ» МУП тата Муркаш райповĕ лайăх ĕçленине палăртса хăварнă. Кăçал та çак асăннă предприятисем лайăх ĕçлеççĕ.

Тав сăмахне çавăн пекех халăха газпа тивĕçтерекен «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн, çурт-йĕре тытса тăрас енĕпе тимлекен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха ертсе пыракан компанин коллективĕсене те калас килет.

Асăннă сфера ĕçченĕсем! Эсир район аталанăвĕшĕн, çынсемшĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ ĕç тăватăр. Тавах сире пурне те çакăншăн. Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанатăп. Йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла тата та ӳсĕмлĕрех вăй хума сире ăнăçу сунатăп. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Ял тăрăхне аталантарассишĕн тимлеççĕ**

# Çивĕч ыйтусем те пур

**Мартăн 13-мĕшĕнче район администрацийĕн кунĕ Чуманкасси ял тăрăхĕнче иртрĕ.** «Кирек епле ыйтăва та пирĕн пĕрле татса памалла», – палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев. Чуманкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем хăйсен ялĕсен аталанăвĕ, пурнăçĕ туллирех те илемлĕрех пуласси хăйсенчен ытларах килнине ăнланаççĕ. Шывпа тивĕçтерессинче тĕл пулакан пăтăрмахсене татса парас тесе «Муркашри çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх» МУП шыв системине пăхса тăма килĕшӳ тунă хыççăн ку енĕпе те лару-тăру самай лайăхланнă. Çавăн пекех ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Николай Белов хăйĕн отчетлă докладĕнче палăртнă тăрăх, Карманкассинчи шыв башнин насусне улăштарнă. Çак ялпа Шарпашра шыв пăрăхĕсене юсанă. Апла пулин те кунта ку енĕпе ыйту пĕтĕмпех татăлнă теме çукха. Залра ларакансем каланă тăрăх пĕр ялĕнче çăл тума илсе панă 5–6 кăшăлпа усă курман. Тепĕр ялта вара çăлне чавнă, анчах кăшăлĕсем çитмеççĕ. Çак икĕ тĕслĕх ял çыннисен хăйсен те активлăрах пулмалли çинчен калать пек туйăнать. «Пире çавна туса парăр» тенипе ыйтусене татса пама пулмасть вĕт. Ял тăрăхне тирпей-илем кĕртес ыйтăва та пырса çапать çакă. Пухусенче мĕн чухлĕ каласан та, ял пуçĕсенче çӳп-çап миххисем йышланса пыраççĕ. Вĕсене кам кăларса тăкать. Каллех хамăр. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев калашле, «эп тухса тăкман» тени хамăра хамăр суйни пулмасть-и вара? Ку енĕпе ыйтăва пĕрлех татса памалла. Çавăнпа та Ростислав Николаевич кашни ял пуçне çӳп-çап пуçтармалли контейнерсем илсе лартма сĕнчĕ. Ку ыйтăва ял çыннисен пĕрле пуçтарăнса татса памалла.

Районти адмкомиссинче ку ял тăрăхĕнчен 21 материал пăхса тухни Чуманкасси тăрăхĕсене: «Хам йытăпа, хам çӳп-çаппа хам хуçа: мĕн тăвас килет, çавна тăватăп», – текен йăларан хăпмалли çинчен калать пулĕ.

Хĕллехи вăхăтра кунта çул пăхса тăрассипе йывăрлăхсем çук. Ку тивĕçе Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх хăй çине илнĕ. Ял çыннисен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассине те куçран вĕçертмеççĕ. 5 çемье çак тĕллевпе патшалăх пулăшăвне илнĕ.

Паян пур çĕрте те çĕр ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Июлĕн 1-мĕшĕччен хуçисемшĕн кирлĕ мар шутланакан çĕрсене ял тăрăхĕсем çине куçарса пĕтермелле. Николай Валерианович каланă тăрăх пурĕ 1317 пай çĕрĕ. Вĕсенчен 200 çын вĕсене хăйсен харпăрлăхне куçарнă. Пай çĕрĕсем пур 320 çын вилнĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ хуçисене кирлĕ мар шутланакан 82 пай çĕрне ял тăрăхĕ çине куçарма ыйтса район судне иск тăратнă.

Чуманкасси ял тăрăхĕн малашлăхĕ пысăкки пирки депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Чуманкасси шкул директорĕ В. Васильев та пĕрре те иккĕленмест. Паян кунта 212 ача вĕренет. Иртнĕ çул ачасем çураласси ӳсни те шкул нихăçан та пушанса юлмасси çинчен калать. Валерий Михайлович çакна палăртрĕ. Шкулпа ача садне харпăр хăй хутса ăшăтмалла тăвас кăмăл пур кăçал. Çавăн пекех шкул столовăйне тĕплĕ юсаса çĕнетес ĕмĕте те пурнăçа кĕртесшĕн.

Татса памалли ыйтусем ку ял тăрăхĕнче те сахал мар-ха. Кăçалтан пуçласа бюджет учрежденийĕсенче ĕçлекенсене кашни кварталтах ĕç укçи ӳстермелле. Çулталăк вĕçне вăл 33 процент таран ӳсмелле. Ку тĕллевпе хушма укçа-тенкĕ уйăрманран культура учрежденийĕсене оптимизацилес ыйтăва тĕкĕнмесĕр иртме çук. Чуманкасси ИКЦ ертӳçи О. Герасимов иртнĕ çулхи ĕçсемпе паллаштарнипе пĕрлех çак ыйту çинче те чарăнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ĕç укçи ӳстерни мероприятисен йышне те, пахалăхне те ӳстерме хистенине палăртрĕ. «Ĕç укçине ĕçлесе илмелле, клуб алăкне уçса хупнишĕн памаççĕ ăна», – терĕ. Оптимизаци ыйтăвĕ тавра таранăн шутласа тĕрĕс утăмсем тума сĕнчĕ.

Проблемăсем тенĕрен, эрех-сăрапа иртĕхнипе çыхăннисем те çук мар кунта. 3 преступлени кунта эрех ĕçсе çемьере харкашу тухнипе çыхăннă. Ӳсĕрле «янах шăммине чалăштарас» чиртен ĕçме пăрахмасăр хăтăлма çук пулĕ. Çитменнине çакă ачасене те тӳрремĕнех пырса тивет. Ростислав Николаевич палăртнă тăрăх çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен районти комиссинче çак ял тăрăхĕнчен 14 ашшĕ-амăшне пăхса тухни те арçынсемпе хĕрарăмсем ачисене эрех стаканĕпе улăштарассине пăрахăçламалли çинчен калать. 9 çемье ял тăрăхĕнче учетра тăрать. Вĕсенче вара 21 ача ӳсет. Ашшĕ-амăшне хăйсен тивĕçĕ çинчен маннине пула вĕсем нуша кураççĕ.

Тĕл пулура Чапаев яч. хис. хуçалăх ертӳçи И. Захаров та тухса калаçрĕ. Вăл ял халăхне пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарас ыйтăва пĕрле татса пама пулăшассине пĕлтерчĕ. Çакă унăн хуçисемшĕн те йӳнĕрех ларать. Пай çĕрĕсене хуçалăха арендăна парса тырă-улăм илни те ял çыннишĕн пысăк пулăшу пулнине палăртрĕ.

Тĕл пулура çулсем тăвас, çĕнĕ урамсене электрификацилес, пĕвесене тытса тăрас тата ытти ыйтусене те хускатрĕç.

**Мартăн 14-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнче** иртнĕ тĕл пулура вара район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хăйĕн сăмахне районти çивĕч проблемăсенчен пуçланă май культура ĕçченĕсенне ĕç укçи хăпартас ыйтăва тӳрех çĕклерĕ. Çакă çӳлерех асăннă пек культура учрежденийĕсене оптимизацилессипе те çыхăннипе пулĕ, ку ыйту тавра хĕрӳ калаçу пулчĕ. Ростислав Николаевич çакна палăртрĕ: культура ĕçченĕсен паян ĕç укçи пысăк мар. Ăна çулталăк вĕçне 15 пин тенкĕ таран çитерни çак професси çыннисене юратнă профессипе ĕçлесех йĕркеллĕ ĕçлесе илме пай панине палăртрĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Волков иртнĕ çулхи ĕçсемпе паллаштарнă май çĕр ыйтăвне те тĕплĕн тишкерчĕ. Пурĕ ку тăрăхра пай çĕрĕсем 986 пулсан, вĕсен хуçисенчен 153-шĕ вĕсене харпăрлăха куçарнă. 16-ăн хăйсене çав лаптăксем кирлĕ мар тесе йышăнчĕç. Хуçисене кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсене ял тăрăхĕ çине куçарма ыйтса суда 32 пай çĕрĕпе документсем тăратнă. Тепĕр 447 пай çĕрĕпе çакна валли документсем хатĕрлеççĕ. Александр Сергеевич хăйĕн сăмахĕнче вырăнти обществăлла организацисем, ял тăрăхĕн депутачĕсем хастар пулнине палăртрĕ. Ветерансен канашĕн пуçарăвĕпе кунта иртнĕ çул ветерансен аллейине чĕртсе хăварчĕç. Ветерансен хорĕ «халăх коллективĕ» ят çĕнсе илчĕ.

Орининти ИКЦ ертӳçи В. Васильева каланă тăрăх кунта призывниксен кунне иртterme пуçларĕç. Çимĕк уявне ял çыннисемпе иртересси те ырă йăлана кĕнĕ. Иртнĕ çул çулталăк хушшинче пурĕ 7500 тенкĕлĕх тӳлевлĕ пулăшу панă пулсан, кăçал 2 уйăх ытларах тапхăртах ку кăтартăва Оринисем 9 пин çурăна çитернĕ. Мулкачкассисен 2 пин тенкĕпе, Атапайсен 1 пин тенкĕпе танлашать вăл. Ял çыннисем çĕнĕ директор пуçаруллă та тăрăшуллă пулнине палăртрĕç.

Тĕл пулура пуçтарăннисем çӳп-çап пуçтарас, шывпа тивĕçтерес, пушар машинине тытса тăрас, çĕнĕ урамсене электрификацилес тата хăйсене хумхантаракан ытти ыйтусене те хускатрĕç.

Çакна каламалли çеç юлать. Иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕпе ял тăрăхĕсем хушшинче иртнерĕ экономика ăмăртăвĕнче Оринин ял тăрăхĕ 1 вырăн йышăнма пултарчĕ. Çакă вăл ку тăрăхра пурăнакансем тăрăшулли çинчен калать. Оринисем кăçал та маттур пуласси, умри тĕллевсене пĕрле тата тĕрĕс татса парасси çинчен иккĕленес те килмест.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Калаçу – пенси ыйтăвĕ тавра

Мартăн 12-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕнчи Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ В. Николаев, халăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ И. Петрова, социаллă тӳлев пай пуçлăхĕ С. Николаев тата районти уйрăм ертӳçи А. Константинов ĕç ушкăнĕсемпе тĕл пулчĕç. Чи малтанах вĕсем район администрацийĕнче вырнаçнă нумай функциллĕ центрта халăха йышăнма палăртрĕç. Малашне çак муниципаллă автономлă учреждениире РФ Пенси фончĕн услугисемпе те тивĕçтерĕç. Ĕç ушкăнĕ çакăн хыççăн Тойкилтĕри шкул коллективĕпе тĕл пулчĕ, вĕсен ыйтăвĕсем çине хуравларĕ.

Район администрацийĕнче çӳлерех асăннă представительсем ултă обществăлла организацисен ертӳçисемпе тĕл пулчĕç. Ĕç кунĕнчи тĕп калаçăвăн теми Раççейри пенси тытăмĕн аталанăвĕн стратегийĕн çул-йĕрне – уйрăм предпринимательсен тата харпăр хăй ĕçне йĕркеленĕ çынсен ытти категорийĕ тĕлĕшпе тарифпа бюджет политикине улăштарассине, пенсие маларах кăлармалли тытăма реформăлассине, пулас пенсин пухăнса пыракан пайĕн тарифне валеçессине, пенси тытăмĕн валеçĕнекен пайĕн улшăнăвĕсене – пурнăçласси. Çак ыйтусем чылайăшне, тĕрĕсрех каласан, пурне те пăшăрхантараççĕ. Çавна май вĕсене татса парасси пенси процесне хутшăнакан мĕн пур çыннăн, ĕçлекенĕн, ертӳçĕн тата патшалăхăн интересĕсене шута илсе ведомствăсен пĕр шухăшлă тĕллевлĕ тата пĕр çыхăнура пулмалла.

Асăннă стратеги Раççей Президенчĕн 2012 çулхи 597 № Указĕпе килĕшӳллĕн пурнăçланать. Стратеги проектĕнчи хăш-пĕр йĕркесене общественность тата экспертсен шухăш-кăмăлĕсене шута илсе улшăнусем кĕртнĕ. Асăннă стратеги тĕллевĕсемпе задачисем Раççейри пенси системинче 2030 çулччен пурнăçланмалла. Стратегипе килĕшӳллĕн пенси системине виçĕ шайлă мелпе йĕркелеççĕ.

Пĕрремĕшĕ – ĕç пенсийĕ (патшалăх пенсийĕ), страхлакан взноссенчен тата федераллă бюджетри трансфертсенчен пухăнать.

Иккĕмĕшĕ – корпоративлă пенси ĕç паракан йĕркеленипе ĕçлекен ятарлă килĕшӳпе хутшăннипе пулать.

Виççĕмĕшĕ – уйрăм пенсие ĕçлекен хăй йĕркелет.

Стратегие вăя кĕртесси тапхăрăн-тапхăрăн пурнăçланмалла. Тĕл пулăва хутшăннисем ку тĕлĕшпе хăйсен шухăш-кăмăлĕсене палăртрĕç. Пенси фончĕн системинче тăтăшах тĕрлĕ улшăнусем пулса иртеççĕ.

– Пенси фончĕ пухăнакан тата страхлакан пай пирки çыру-пĕлтерӳ салататчĕ. Малашне çак кăтартăва Пенси фондĕнче, Интернет урлă, Раççейри Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕнчи Муркашри хушма офисĕнче пĕлме пулать, – терĕ РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ В. Николаев тĕл пулăва пухăннисене.

Сусăр ачасене тата ашшĕ-амăш хӳттисĕр юлнă çул çитмен çамрăксене пулăшас тытăмри патшалăх политикине çĕнетмелли мерăсем тĕлĕшпе РФ Президенчĕн 2012 çулхи 1688-мĕш саккунĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Çавна май кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 18 çула çитмен инвалидсене е пĕчĕкренех инвалид шутланакансене пăхакан граждансене: амăшне е ашшĕне (усрава илекене) е опекуна (попечителе) уйăхсерен 5500, ыттисене 1200 тенкĕ тӳлеççĕ.

– Çак тӳлеве инвалида пăхса усранă тапхăрти пенсипе тивĕçтерекен органта упранакан документсене тĕпе хурса инвалид ачан пенсийĕпе пĕрле параççĕ, – терĕ халăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ И. Петрова.

Тĕл пулăва пухăннисен ыйту хыççăн ыйту пулчĕ, кашниех пысăк пĕлтерĕшли, чуна тивекенни. Районти АПК ветеранĕсен, çавăн пекех Оринин ял тăрăхĕнчи ветерансен канашĕсен ертӳçи, «Путь Ильича» агрофирмăн ĕç тăвакан ертӳçи В. Вязов тăтăшах халăх, уйрăмах аслă ăрурисем хушшинче. Çавна май вĕсен пăшăрханăвĕ – унăн чун ыратăвĕ, вăл куллен тĕл пулакан ыйтусем çĕклерĕ.

**Ыйту: Патшалăхăн шутланман Пенси фончĕсем халăх шанăçне кĕреççĕ, халăха улталаççĕ. Ултавçăсен аллинчи çынна кам хӳтĕлет?**

Палăртса хăвармалла, Раççей шайĕнче НПФ 100 ытла, кашниех хăй çумне ытларах та ытларах çынна, тĕрĕсрех каласан, укçине явăçтарма тăрăшать. Çавăн пекех пысăк-пысăк тупăш шантарать, ку вăл – тĕп илĕртӳ. Анчах та патшалăх шайĕнчи фонд пур чухне мĕншĕн аякрине шырамалла-шанмалла? Районпа республикăра та НПФ филиалĕсемпе представительствисем чылай. Вĕсен ĕçченĕсем çынсен шанăçне кĕме хăтланаççĕ, хваттерсем тăрăх çӳреме те именмеççĕ.

**Ыйту: Пенси шутлавĕнче усă куракан 1,2 коэффициент питĕ вырăнсăр. Çакă ырми-канми ĕçленисене пачах та хакламасть, тивĕçлипех кӳрентерет.**

**Ыйту: Политика репрессийĕсене пула инкек тӳснисен Чăваш Республикинчи Ассоциацийĕ, вăл шутра Муркаш районĕнчи уйрăмĕ Шупашкар хулинче музей валли уйрăм пӳлĕм уйăрасси пирки пăшăрханать. (Асăннă организаци ертӳçи Н. Клементьев).**

**Ыйту: Мĕншĕн районпа хула хушшинчи çăмăллăхлă çул çӳревпе туллин тивĕçтермеççĕ? (Ю. Щегольков).**

Çак тата ытти ыйтусем тĕлĕшпе уçăмлăх кĕртессинче витĕм кӳме ыйтрĕ «Пенсионерсен пĕрлĕхĕ» обществăлла организацин ертӳçи А. Скворцов Раççей Федерацийĕнчи Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи тата районти уйрăмĕсен представителĕсенчен.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Жеребьевка**

**14 марта 2013 года**

**ПРОТОКОЛ**

**жеребьевки, проводимой Моргаушской ТИК в целях распределения печатной площади на безвозмездной основе, для размещения предвыборных агитационных материалов кандидатов на должности глав Сятракасинского, Ярабайкасинского сельских поселений Моргаушского района Чувашской Республики**

В проведении жеребьевки приняли участие:

- Тарасова Л.Ю. – председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии;

- Фомина В.Н. - секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии;

- Николаева И.А. – член Моргаушской территориальной избирательной комиссии с правом решающего голоса.

В соответствии с главой 7 Федерального Закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и главой 6 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» представляет зарегистрированным кандидатам по досрочным выборам на должности глав сельских поселений равный объем печатной площади и устанавливает порядок публикации предвыборных агитационных материалов.

В соответствии с избирательным законодательством, общий минимальный объем площадей, выделяемых под агитационный материал, должен составлять не менее 10 процентов от общего объема разового выпуска печатного издания, при этом не менее 40 процентов печатной площади должно предоставляться безвозмездно. В период проведения предвыборной агитации с 16 марта 2013 года по 12 апреля 2013 года выйдет 8 номеров газеты (5 номеров – в марте, 3 номера – в апреле т.г.). Объем печатной площади, выделяемый на безвозмездной основе каждому зарегистрированному кандидату, составляет 303 квадратных сантиметра.

Жеребьевка по предоставлению печатной площади на безвозмездной основе в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» определила следующий порядок размещения печатных агитационных материалов:

| № п/п | Ф.И.О. кандидата | Дата выхода номера газеты | Распределение кандидатов |
|---|---|---|---|
| 1 | АЛЕКСЕЕВА ЭЛЬВИРА МИХАЙЛОВНА | 30.03.2013 | № 6 |
| 2 | НИКОЛАЕВА МАРИНА ДМИТРИЕВНА | 30.03.2013 | № 4 |
| 3 | ПАВЛОВ НИКОЛАЙ ВИТАЛЬЕВИЧ | 30.03.2013 | № 5 |
| 4 | ТРОФИМОВ ГЕННАДИЙ ВЕНИАМИНОВИЧ | 30.03.2013 | № 2 |
| 5 | ФЕДОРОВ АЛЕКСАНДР СЕРГЕЕВИЧ | 30.03.2013 | № 1 |
| 6 | ФРОЛОВ ДЕНИС ПАВЛОВИЧ | 30.03.2013 | № 3 |

# Наянлăх та, сӳрĕклĕх те ура хурать

Профилактика кунĕ



Иртнĕ эрнере районти профилактика кунĕ Москакасси ял тăрăхĕнче иртрĕ. Профилактика субъекчĕсем ушкăнсемпе ял тăрăхĕнчи йĕркелĕхе тĕрĕслени-пе пĕрлех йĕркене пăсассинчен асăрхаттарчĕç. Сунарçăсем хăйсен хĕç-пăшалĕсене мĕнле упранине, обществăлла вырăнсенче ӳсĕр çынсем пуррипе çуккине, йĕплĕ пралук хыçĕнчен условлă майпа срокчен тухнисене, учетри гражданинсене – кашнин патне çитрĕç пакунлисем. Лавккасенче эрех-сăра сутасси саккунпа килĕшсе пурнăçланмаллине те куçран вĕçертмерĕç. Шăпах Ситуккассинчи пĕр лавккара саккуна пăснă тĕслĕх пулчĕ те. Кунта ĕç-пуç 50 тăваткал метр калăпăшран пĕчĕкрех суту-илӳ точкинче алкоголь продукцине сутассипе çыхăннăччĕ.

Йĕркене пăсассинчен асăрхаттарассипе пĕрлех йывăр лару-тăрулла çемьесене çитсе килесси те профилактика кунĕсенче тĕп вырăн йышăнать. Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Матросов пĕлтернĕ тăрăх кунта 11 çемьене учета илнĕ, çул çитменнисене улттăн. Профилактика кунне пĕтĕмлетнĕ çĕре икĕ çемьене тата тăвата ачана чĕннĕччĕ. Вĕсен лару-тăрăвне ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те, депутатсем те, педагогсем те пĕлсе тăраççĕ, пулăшмасăр хăвармаççĕ. Анчах та çак çынсен хăйсем енчен малалла йĕркеллĕ пурăнас туртăм сахалрах палăрать çав.

Пĕр çемье акă кунти хуçалăхăн общежити пулнă çуртĕнче тĕпленнĕ. Çав вăхăтрах арçыннăн Етĕрнере хваттер те пур иккен. Ăна пытармасть вăл. Ăшă та çутă хваттере мĕншĕн Москакассинче пурăнмалли условисем çукпа пĕрех пӳлĕмсем çине улăштарнине татăклăн ăнлантарса параймарĕ. «Çуркунне енне хуçалăх ертӳçи çак çурта газ кĕртесси пирки каларĕ», – тесе кăна тӳрре тухма тăрăшрĕ. «Передовик» хуçалăхра ĕçлекен тепĕр çемьене те çитрĕмĕр. Килте вăй питти арçын та пур, амăшĕ чирленине кура училищĕре вĕренекен хĕрĕ те ăна пăхма тесе занятисене пăрахсах килнĕ. Апла пулин те кунта хутса ăшăтма вутă-шанкă та çук, пӳртре те тирпейсĕрлĕх хуçаланать. Çемьере пĕчĕк ачасем пулнăран ача-пăча пособине илнипе интереслентĕмĕр. Илсе тăмаççĕ иккен. Виççĕмĕш çемьене çитрĕмĕр. Кунта та ачасемшĕн пособи илсе тăнă вăхăт иртнĕ. Справкăсене часах пуçтарма пулманни çине йăвантараççĕ амăшĕсем. Ĕç укçи пĕчĕк пулнине калакансен çак справкăсене те пулин вăхăтра туса пособи илме документсем тăратмалли каламасăрах паллă. Апла хăйсен кахалĕпех хăйсене ура хураççĕ темелли кăна юлать. Е кирек епле ĕçе те такам килсе туса парассине кĕтеççĕ-ши? Хальхи вăхăтра вара малалла пысăк та хăвăрт утăмсемпе ыткăнакан пурнăç пуçарусăррисене тата наяннисене пачах та килĕштермест. Хуçалăх ертӳçи Н. Царев çак çемьесем ĕçре те ытлашшиех ответлăхпа палăрса кайманнине асăнчĕ. «Пĕчĕк ачасем пурри тытса тăрать», – пĕлтерчĕ вăл.

Тепĕр çемье пирки уйрăммăн асăнас килет. Кăнтăр кунĕнче амăшĕ диван çинче ӳсĕр выртать. Ачисем килте. Урама тухмалли хапхана питĕрнĕ, пӳрте кĕмелли алăка та шал енчен çаклатнă. Çынсемпе пачах та хутшăнма кăмăл çук иккен çак çемьен. Амăшĕ хăй ӳсĕр пулнине «сыв мар эп» тени çине улăштарчĕ те профилактика ушкăнне (вĕсем патĕнче районти полици пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени ертӳçи О. Яковлев, республикăри ачасен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕн районти обществăлла пулăшаканĕ Ф. Ягушов, район администрацийĕн секторсен ертӳçисем И. Кабуркинăпа Л. Петрова пулчĕç) темĕн тĕрлĕ «вырăсла» сăмахсемпе кăшкăрса килтен хăваларĕ. Ӳкĕнесси пирки çăварĕнчен пĕр сăмах та тухмарĕ, тӳрленетĕп тесе шантарнине те курмарăмăр. Ачисем те хаяррăн калаçни вĕсене воспитани парас вăхăта ашшĕ-амăшĕ пушшăн irttерсе янине çирĕплетрĕ кăна.

Ялти çемьесенче мĕн пулса иртнине кӳршĕсем, тăванĕсем яланах пĕлсе тăраççĕ. Тен çакăн пек йывăр лару-тăру туххса тăнинче уйрăм çемьесен айăпĕ кăна мар, кашни çыннăн сӳрĕклĕхĕ те?

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Çемьери преступленисен хăрушлăхĕ пысăк

Район судĕнче

Çемьесенче пусахласа тунă (насильственные) преступленисене следствипе суд практики урлă тишкерес пулсан ку тĕлĕшпе татса памалли тата уçăмлатмалли ыйту сахал марри курăнать. РФ Уголовлă кодексри 115 тата 116 статьясенче палăртнă преступленисене (çемьере пусахласа тунисем) пăхса тухнă чух час-часах пуçарнă уголовлă ĕçсене чарса лартаççĕ. Икĕ ен мирлешнĕрен е Уголовлă кодексри 76 статьяпа килĕшӳллĕн айплисене уголовлă яваплăхран хăтарнăран çак утăм РФ Уголовлă процесс кодексĕн 20 статйин 2 пайĕпе килĕшсе тăрать. Уголовлă кодексри 119 статьяпа (вĕлерессипе хăратни тата сывлăха йывăр сиен кӳни) ĕç пуçарса яваплăхран хăтарни сайра хутра кăна мар тĕл пулать. Хăш-пĕр тĕслĕхсенче вара çакă ытлашши те.

2011 çултах пулса иртнĕччĕ ку ĕç. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Логинов гражданин хуçалăхри мунчара хăйĕн вăтă ашшĕне, унран укçа илес тĕллевпе, хĕнесе пĕтерет. Пуçран та, ытти çĕртен те çапать, тапать. Çапла майпа кĕсйинчен 500 тенкĕ кăларса илет. Çак арçын нарколог врач патĕнче учетра тăнă. «Синдром зависимости от алкоголя, средняя стадия, периодическое употребление» – çапла пулнă унăн чирне палăртакан диагноз. 2010 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчен пуçласа çав çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕччен Логинова 23 хутчен административлă явап тыттарнă. 2006 çулта вара шăпах 119 сатьяпа килĕшӳллĕн пуçарнă уголовлă ĕçе Муркаш районĕн 1 номерлĕ суд участокĕн миравай судйи пăрахăçлама йышăннă. Арçын хăйĕн тăванне вĕлерессипе хăратнă пулнă, анчах та вĕсем мирлешнĕ. Ашшĕне хĕненĕшĕн вара Муркаш район сучĕ Логинова икĕ çул та 6 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăну тунă.

Çак приговорпа килĕшмесĕр Логинов ЧР Аслă судне çăхавласа çырнă. Аслă суд та приговора улăштармасăрах хăварнă. Приговор саккунлă вăя кĕнĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсенче айăплă çынсене уголовлă яваплăхран хăтарни вĕсем обществăшăн хăрушлăх кăларса тăратма пултарнипе çыхăннă. Çакăн евĕр харкашуçăсем вĕлерессипе хăратни е тепĕр çыннăн сывлăхне йывăр сиен кӳни хăрушă инкек патне илсе çитерме пултараççĕ.

Пусахласа тунă преступленисем хушшинче пĕлсе тăрсах тепĕр çыннăн сывлăхне сиен кӳнĕрен ăна ăнсăртран вĕлерни те (УК 111 статйи) сахал мар тĕл пулать. Кашнин ирĕкĕпе прависене Конституци хӳтĕлет. Уголовлă кодексри 2 статьяра кун пирки çырса кăтартни пур пулин те, çакăн пек тĕслĕхсем чылай.

Акă кăçал январĕн 31-мĕшĕнче Муркаш район сучĕ кăшт маларах асăннă статьяпа Шорников гражданин тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерчĕ. Пĕлтĕр октябрь уйăхĕнче çак гражданин ӳсĕр пулнă май хăйĕн вăтă ашшĕ-амăшĕнчен укçа тапăнса ыйтма пуçланă. Укçа паманнине кура вара амăшне швабрăпа çапма тытăнать. Швабра аври хуçăлсан – аврăн икĕ пайĕпе, кайран – тимĕр турчкапа. Йывăр сурансене тӳсеймесĕр амăшĕ вырăнтах вилсе каять.

Шорников та, маларах асăннă арçын пек, нарколог врач патĕнче учетра тăрать, диагнозĕ те çавăн йышшиех. Суд ĕçе тишкерсе ăна 8 çуллăх ирĕкрен хăтарма йышăну тăвать. Йышăну кăçалхи февралĕн 12-мĕшĕнче вăя кĕчĕ.

**З. ГАЛКИНА,**
**ЧР Муркаш район сучĕн судьяна пулăшаканĕ.**

Конкурсный отбор

### Объявлен конкурсный отбор на участие в Президентской программе подготовки управленческих кадров в 2013/2014 учебном году

Министерство экономического развития, промышленности и торговли ЧР сообщает о проведении конкурсного отбора специалистов для подготовки в 2013/2014 учебном году в рамках Государственного плана подготовки управленческих кадров для организаций народного хозяйства России. Срок приема документов – по 30 апреля 2013 года.

Программой подготовки предусматривается:

1.Курс профессиональной переподготовки в ведущих российских образовательных учреждениях и бизнес-школах по направлениям: менеджмент, маркетинг, финансы, менеджмент в социальной сфере.

2.Курс повышения квалификации по направлениям: развитие предпринимательства, менеджмент в сфере инноваций.

3.После завершения обучения возможна стажировка на российских или зарубежных предприятиях.

Более подробную информацию можно получить по телефону (8352) 64-20-56, на сайте www.economy.cap.ru.

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельного участка

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060404:216, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 22 897 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 313, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1624, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для сельскохозяйственного производства, площадью 182397 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:230701:535, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230701, для производства сельскохозяйственной продукции, площадью 1 469 884 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 313, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:180201:146, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с.Акрамово, ул.Садовая, д. 11, для строительства магазина-кафе, площадью 88 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 313, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:130501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Кумашова Людмила Алексеевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Нискасы, ул. Новая, д. 40.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:130501:2 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Башмакова Зоя Павловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Иштереки, ул. Северная, д. 4.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Чернов Николай Николаевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 67.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Петровым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-30. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Анисимов Валерий Владимирович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Торханы, ул. Садовая, д. 2. Анисимова Ольга Ивановна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Торханы, ул. Садовая, д. 2.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Семенова Надежда Геннадьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Торханы, ул. Мичурина, д. 10. Семенов Игорь Юрьевич, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, д. 39, кв. 6.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2 Адрес местоположения образуемого земельного участка: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

Конкурсный управляющий имущества ИП Цветковой Зои Александровны (429544, ЧР, Моргаушский р-н, д. Шупоси, ул. Ижекасинская, д. 157, ОГРНИП 304213623600023, ИНН 211200434270) Руссков Сергей Николаевич (ИНН 212705237117, СНИЛС 110-300-338-58, г. Чебоксары. ул. Петрова, д. 6, оф. 314, член НП «СРОАУ ЦФО» (109316, г. Москва, Остаповский проезд. д. 3, стр. 6, оф. 201, ОГРН 1027700542209, ИНН 7705431418), действующий на основании решения Арбитражного суда ЧР от 26.12.2012 г. по делу № А79-11511/2012, сообщает о продаже земельного участка общей площадью 13800 кв. м. с кадастровым номером 21:17:080901:871, категория земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенное использование: для сельскохозяйственного производства, расположенный по адресу: ЧР, Моргаушский район, территория землепользования СПК «Новая Юнга», поле № 6, полевой севооборот № 1, позиция № 3, по цене наибольшего предложения, но не менее чем 90100 (девяносто тысяч сто) рублей (с НДС), оплата по договору купли-продажи производится в размере 100% в течение 5 дней с момента его подписания. Заявки принимаются с 21.03.2013г. по 05.04.2013г. К заявке прилагаются копии действительной выписки из ЕГРЮЛ, ЕГРИП, учредительных документов (для юр. лиц), документов, удостоверяющих личность (для физ. лиц), надлежащим образом заверенный перевод на русский язык документов о гос. рег. юр. лица или гос. рег. физ. лица в качестве ИП в соответствии с законодательством соответствующего государства (для иностранного лица); сведения об ИНН; адрес электронной почты, копии документов, подтверждающих полномочия руководителя (для юр. лиц). Договор купли-продажи заключается с заявителем, предложившим наиболее высокую цену в течение 2 дней с момента окончания приема заявок. Ознакомиться с подробными характеристиками имущества можно в рабочие дни с 15.00 час. до 16.00 час. по месту нахождения управляющего: 428003, г. Чебоксары, ул. Петрова, д. 6, оф. 314, wingroadl@yandex.ru, тел.: 8-906-381-79-32.

# Пирĕн пата çыраççĕ

## Халăх тăрăшмасăр пулмасть



Муркаш енчен Йÿçкассине пырса кĕрсен сылтăм енче халĕ чиркÿ мăнаçланса ларать, маларах вара больница çуртĕ тунсăхлăн курăнатчĕ. Çакăнта йывăçран 1898 çулта Давид Вульфович Высоцкий купса укçипе Тĕлĕнтермĕшсем тăвакан Святой Николай ячĕпе пĕр престоллă чиркÿ туса лартнă. 1936 çулта чиркĕве хупнă. Вăл вăхăтра влаçра пулнă çынсем чиркÿсене çĕмĕрсе аркатса çÿренĕ. Çак чиркĕвĕн тăррине çĕмĕрсе антарсан çав çуртра пĕр вăхăт шкул ачисене вĕрентнĕ. 1951 çулта кунта больница ĕçлеме тытăннă, 2008 çулччен – 57 çул хушши – кунта çынсем сипленнĕ. Кайран больница çул урлă тепĕр енчи çĕнĕ 2 хутлă çурта куçрĕ...

2008 çулхи февраль уйăхĕнче Йÿçкасси прихутне кĕрекен ялсенчи халăх уйăрнă уполномоченнăйсен пухăвĕ пулать. Унта çак чиркĕве çĕнĕрен тума пуçласси çинчен калаççĕ. Пухура ĕçе йĕркелеме староста суйлаççĕ. Çынсем пĕр шухăшлă пулса çак ĕçе Зиновий Михайлович Кутузов пурнăçлама пултарассине калаççĕ. Малтан «Ударник» совхоз директорĕнче те, лаборатори ертÿçинче те нумай çул ĕçленĕ вăл. 70 урлă каçнă пулин те çак йывăр ĕçе хастаррăн тытăнчĕ. Хĕллех ял халăхĕнчен укçа пухас ĕçе пуçăнчĕç. Зиновий Михайловичăн çул çÿреме те чылай тивнĕ, анчах та хăйне укçа тÿлессине кĕтмен вăл. Чиркÿ туса пĕтеричченех çак ĕçе ответлăха туйса пурнăçларĕ.

Манăн унпа нумайччен калаçса ларма тÿр килчĕ. Вăл чиркÿ тăвас ĕçре Вăрманкас Сурăмри платниксене мухтаса асăнчĕ. Унта пурăнакан Василий Степанов предприниматель чиркÿ тума нумай пулăшни çинчен каласа пачĕ. Василий ашшĕ пурăнать-ха, 96 çулта. Чиркĕве пăснă вăхăтра вăл шăпах унта староста пулнă. Сăвапллă вырăна пăстарас мар тесе тăрăшнă, анчах та ăна итлекен пулман. «Сирĕн парти хăçан та пулин салатех», – тесе каланă пулнă вăл ун чухне. Унтанпа нумай шыв юхрĕ. Чылай çĕрте чиркÿсене çĕнĕрен туса лартма тытăнчĕç. «Эсир укçа ĕçлесе илме пултаратăр. Çак чиркĕве туса пĕтермеллех», – ывăлĕ çурт-йĕр тăвас енĕпе пĕлÿ илнине шута илсе çапла каланă ăна ашшĕ.

Василий проект тăвать. Платниксем малтанах вăл уйăрса панă укçа-тенкĕ пуррипе ĕçе тытăнаççĕ. Василий Степанов чиркÿ тунă çĕре 200 пин тенкĕ ытла хывать. Хăйĕн машинисем тĕрлĕрен кирлĕ хатĕр турттарса та пулăшать.

Халăх тимлесе ĕçленине кура хуçалăх директорĕ Платон Павлович Давыдов та чиркÿ тума питĕ нумай пулăшать. Вăрманкасра çуралнă Владислав Капитонов, Шупашкарти 5-мĕш стройтрест директорĕ, канмалли кунсенче хăйĕн рабочийĕсемпе пĕрле Йÿçкассине килсе чиркÿ тума пулăшать.

Çак чиркÿ чĕрĕлсе тăтăр, çĕнелтĕр, ĕçлетĕр тесе прихутри çынсем чăнах та тăрăшрĕç. Нумаях пулмасть чиркÿ настоятелĕпе Сергий аттепе калаçма тÿр килчĕ. Вăл чиркÿ чанĕсем кирли пирки пĕлтерчĕ. Василий Степанов чиркÿ валли пĕр чан илме шантарнă-мĕн.

Тавах сире, çакăнта ĕçленĕ платниксем. Пархатарлă ĕçе хутшăннă мĕн пур çынна, уйăрмах Вăрманкас Сурăмсене тав сăмахĕ калас килет.

**Сăн ÿкерчĕкре: В. Степанов, З. Кутузов, П. Давыдов.**

**И. ЯКОВЛЕВ.**
Хурăнкасси ялĕ.

## Асамлă юрă-кĕвĕ ытамĕнче

Москакассинчи информаципе культура центрĕнче çак кунсенче тĕлĕнмелле илемлĕ те пуян программăллă концерт пулчĕ. Концерта Муркашри культура центрĕнче йĕркеленĕ, халăх ятне илме тивĕçнĕ «Муркаш» фольклор ушкăнĕ кăтартрĕ.

Мĕн тери илемлĕ иккен чăваш ташши-юрри. Вĕсене курса тата итлесе киленме пултарчĕç пухăннисем. Концерт программине Людмила Верховцева ертсе пычĕ. Людмила Мироваевăпа Елизавета Костина юрланă юрăсем вара пурин чунне те тыткăнларĕç. Çавăн пекех Фаина Григорьева, Нина Сазонова, Эльвира Федотова, Татьяна Васильева, Владислав Ялугин, Вячеслав Михайлов та юрлама ăста. Концерт курма пынисем вĕсене чылай вăхăт алă çупса саламларĕç. Шÿчĕсем те, ташшисем те куракансен кăмăлне кайрĕç. Чăн-чăн уяв парни пулчĕ Москакассисемшĕн «Муркаш» фольклор ушкăнĕн концерчĕ. Ку концерт программипе ниçта та Муркаш ятне ярас çук вĕсем. Коллективăн художество пултарулăх ертÿçин Александр Аникинăн ăсталăхĕ куç кĕрет.

Апла пулсан вĕсене малашне те пултарулăх ĕçĕнче ăнăçу сунас килет. Куракансене яланах çавăн пек пысăк пултарулăхпа савăнтармалла пултăр. Тавтапуç пире савăнăç парнеленĕшĕн пурин ячĕпе те.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

## «Яшсен салтак тивĕçне пурнăçламаллах»

«Океансем, тинĕссем... – темĕн чухлĕ шыв урлă каçнă, çиллĕ тăвăлсем витĕр те тухнă. Астăвтăп, пирĕн карап Инди океанĕнче ишнĕ чух 6 баллă тăвăл пулнăччĕ, Охотский тинĕсре вара – 11 баллă. Ăста кăна çитсе курма тивмерĕ пулĕ служба вăхăтĕнче. Флота лекмен пулсан тен тĕнче курмăттăм та пулĕ», – çапла каласа парать 1981–1984 çулсенче салтак тивĕçне «Василий Чапаев» карап çинче пурнăçланă Александр Максимов (**сăн ÿкерчĕкре сулахайри**).



Александр Николаевич Исетерккĕре çуралса ÿснĕ. Чуманкассинчи вăтам шкула пĕтернĕ çулах ăна алла повестка панă. Çапла вара 1981 çулхи октябрьте вăл салтак аттине тăхăннă.

Çартан таврăннă хыççăн водителе вĕреннĕскер çак ĕçпех ĕçлеме тытăннă. 1986 çулта çемье çавăрнă хыççăн тепĕр çулталăкран çамрăк мăшăр Чулхула облаçĕнчи Егорьевск салине куçса каять. Унта вун пилĕк çула яхăн ĕçлесе пурăннă хыççăн Максимовсен çемйи Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Шарпаш ялне килсе тĕпленет. Хĕрпе ывăл пăхса ÿстерессĕ вĕсем.

Паянхи кун Александр Николаевич Муркашри сĕт заводĕнче водительте тăрăшать. Тинĕс флотĕнче службăра пулма тÿр килнĕшĕн хĕпĕртенине пытармасть моряк.

– Инçетри Русский утрав çинче иртнĕ вĕренÿ хыççăн Владивосток хулинче присяга тытрăмăр. Çавăнтах малашне кам хăш карап çинче службăра тăрассине те палăртрĕç. Эпĕ «Василий Чапаев» БПК (большой противолодочный корабль) çине лекрĕм. Çапла вара «ентеш» çинче виçĕ çул служба тăтăм. Боцман пулнă. 1982 çулта Брежнев вилнĕ хыççăн (эпир вăл вăхăтра шăпах карапра Вьетнамра тăнă) вăрçă тухас хăрушлăх пысăккине пытармастчĕç. Каярах тинĕсе тухрăмăр. Ун чухне те яланах сыхă тăнă (боевая готовность) карап çинче, тăватшар сехет вахтăра тăраттăмăр. Кун пек лару-тăру пĕрре кăна пулман. Астăватăп, Мозамбикрен хамăрăн базăна таврăннă хыççăн Африка çывăхĕнчи Сейшель утравĕ çинче переворот пирки пĕлтерчĕç. Çавăнта ячĕç. Эпир çитсен вырăнти халăх пăшалтан пеме пăрахрĕ. Карап кунта якорь янăран увольненине те кайса килнĕччĕ. Вырăнтисем тыткăна илме пултарассине те калатчĕç. Анчах та шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçланăран пĕтĕмпех йĕркеллĕ иртрĕ.

Дембельчен, йăлана кĕнĕ тăрăх çĕнĕ призыв киличчен, карапа сăрласа хăвармаллаччĕ. Борт номерĕсене улăштарса тăнă. Çапла вара çамрăксем валли çĕнĕ номере эпĕ çырса хăварнăччĕ. Аса илмелли самантсем питĕ нумай. Çамрăксене вара сывлăх май парать пулсан, чăн-чăн арçын пулас тесен салтак тивĕçне пурнăçламаллах тесе калатăп, – çапла вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Александр Николаевич салтак çулĕсене аса илнĕ май.

**З. ИВАНОВА,**
**Чуманкасси ял библиотекин ертÿçи.**

## Асаннесене халалларăмăр

Хĕрарăмсен уявне халалласа таçта та уяв каçĕсем ирттерчĕç пулĕ. Пирĕн Очăкассинчи библиотекăра та мартăн 7-мĕшĕнче пысăк уяв каçĕ иртрĕ. Кăçал та ăна пурнăç тути-масине сахал мар курнă асаннесене халалларăмăр. Библиотекăна халăх йышлă пухăнчĕ. Уяв каçĕнче калаçу хĕрарăмăн пурнăçри вырăнĕ çинчен пулчĕ. Программăна кĕртнĕ конкурссем вара куракансен асăнче нумайлăха юлчĕç пулĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне халалласа ирттернĕ уяв программине Р. Илларионовăпа Ф. Матвеева хатĕрлесе ертсе пычĕç.

Акă «Сăпка юррипе ÿстернĕ пире» конкурсра Елена Пучкова юрланине çитекенни пулмарĕ. «Хĕрарăмра – пурнăç пуçламăшĕ» конкурса арçынсем кăна хутшăнчĕç. Вĕсем этемлĕхĕн илемлĕ çурри çинчен çыравçăсен тексчĕсене пăхмасăр пĕлнипе тĕлентерчĕç. В. Матвеевăпа В. Илларионов мала тухрĕç. Библиотекăна кĕнеке вулама тăтăш çÿренĕрен пулчĕ вĕсен çак ăнăçăвĕ.

Тепĕр ăмăртура аннесене савса юрлакансем тупăшрĕç. Чăвашла та, вырăсла та илемлĕ те чĕрене пырса тивекен юрăсем шăрантарчĕç. Çĕнтерÿçĕсене палăртма та çăмăл пулмарĕ. Çапах та Галина Языкова, Ирина Григорьева, Серафима Сергеева юрлани илемлĕрех пулнине палăртрĕç.

Уявра ташша юратакансем те ăмăртрĕç. Ку конкурса мăшăрсем хутшăнчĕç. Надеждăпа Юрий Ильинсем, Надеждăпа Павел Тимоновсем, Светланăпа Виталий Грачевсем пултарулăхпа палăрчĕç. Елена Пучковăпа Виталий Грачев куракансене çĕнĕ ташăпа та паллаштарчĕç.

«Уяв кĕрекине хатĕрлесси» конкурс уяв каçне вĕçлерĕ. Ку конкурса хутшăнакансем хăйсем хатĕрленĕ апат-çимĕç пахалăхĕ, пĕлтерĕшĕ çинчен каласа пачĕç, мĕнле хатĕрлемеллине вĕрентрĕç. Ĕç ветеранĕ Валентина Измайлова хăш çимĕçе хăш çимĕçпе пĕрле çисен усăллă пулни çинчен те каласа пачĕ. Уяв хаваслă иртрĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА,**
**Очăкассинчи библиотека ертÿçи.**

## «Чунĕпе те, вăй-халĕпе те çамрăк пулни паха»

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче çулсеренех ял тăрăхĕн пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессипе спартакиада иртет. Кăçал та ăна çĕр-шыв хÿтĕлевçисене халалласа ирттерчĕç. Спартакиадăна ял тăрăхне кĕрекен кашни ялтанах арçынсен командисем хутшăнчĕç.

Кăçал ултă команда вăй висрĕ. Спорт уявĕн программипе килĕшÿллĕн малтанах вăййа хутшăнакансем винтовкăран тĕл перессипе тупăшрĕç. Апăра хĕç-пăшал тытма пĕлмен çын мĕнле хÿтĕлевçĕ-ха вăл? Спартакиада программине малалла йĕлтĕрçĕсем тăсрĕç. Кашни командăрах тĕрлĕ ÿсĕмри йĕлтĕрçĕсем лайăх результатсем кăтартрĕç. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров та ăмăртăва хутшăнни çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулчĕ.

Вырăнти спартакиадăн чи интереслĕ те чăтăмсăррăн кĕтекен пайĕ – волейбол вăййи. Курма килнĕ кашни çынах «хăйĕн» командине хавхалантарма тăрăшрĕ. Таврана каç сĕмĕ çапма пуçласан та никам та киле васкамарĕ: ватти те, вĕтти те савăнчĕ.

– Çулĕ пĕлтерĕшлĕ мар, спорта юратакансем чунĕпе те, вăй-халĕпе те çамрăк пулни паха, – çапла палăртрĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров спартакиадăна пĕтĕмлетнĕ май.

Чи хастаррисем Шетмĕпуçсем пулчĕç, 2-мĕш вырăнта – Катăкуйсем, 3-мĕш вырăнта – Автанкассисем. Спартакиадăна хутшăннă пур команда та парнесене тивĕçрĕ. Вăйăсене хутшăннă чи аслă вылякана – А. Васильева (Катăкуй), чи çамрăк вылякана – Д. Александрова (Автанкасси), чи хастар та пултаруллă шахматиста Л. Краснова (Тивĕш) уйрăммăн палăртрĕç. Спартакиада кубокĕ вара Шетмĕпуçсене малашнехи ăмăртусене хатĕрленме хавхалантарĕ.

**Вырăнти çамрăксен канашĕ.**

## «Пучахпа» Çăварни те кичем мар

Иртнĕ çулталăк вĕçĕнче Орининти информаципе культура центрĕ çумĕнчи Мулкачкассинчи ял клубĕ çумĕнче çĕнĕ пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленчĕ. «Пучах» тесе ят панĕç ăна. Коллективăн пултарулăх ертÿçи – Н. Кондукторова. Пултарулăх ушкăнĕ 20 çынна пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен иккĕшĕ – 7 çулхи ачасем. Кĕске хушăрах пултарулăх ушкăнĕ 20 ытла чăваш халăх юррине юрлама хăнăхрĕ, Оринин, Ярапайкасси, Токшик тата Атапай ялĕсенче пулса хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарма ĕлкĕрчĕ.

Мартăн 10-мĕшĕнче «Пучах» Çеменкассинче иртнĕ хĕл ăсатăвĕн уявне те хутшăнчĕ. Сăмах май уявра никама та кичем пулмарĕ темелле. Илемлĕ юрă-ташăпа пĕрлех спорт вăййисем те хаваслă иртрĕç: йĕлтĕрпе чупасси, кире пуканĕ çĕклесси, кĕвентепе витрери шыва тăкмасăр йăтса ăмăртасси, вĕрен туртасси, пăшалтан тĕл пересси тата ытти те. Уявра кашниех вĕри чей ĕçме, тутлă икерчĕ тутанма пултарчĕ.

Хĕле ăсатма депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Вязов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Н. Ванеркинпа В. Мидуков та хутшăнчĕç. Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Волков ял халăхне саламланă май Нина Антоновнăпа Петр Алексеевич Михайловсене çирĕп çемье çавăрса çур ĕмĕр алла-аллăн тытăнса килĕштерсе пурăннă ятпа парне парса хавхалантарчĕ.

Çакăн пек уявсем иртни, халăх хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарма пултарни ял-йышри туслăха çирĕплетме пулăшать.

**Н. СМЕЛОВА,**
**Мулкачкассинчи ялти клуб администраторĕ.**

# Телепрограмма

с 18 по 24 марта 2013 года

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 18.03

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.10, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 Понять. Простить 12+
15.15 Т/с «ТОРГОВЫЙ ЦЕНТР» 16+
16.10 «Пока еще не поздно» 16+
